**Уяв умĕнхи интервью**

# Çуртсем те, çулсем те тăватпăр

Тепĕр 4 çемьене ача çуралсан паракан хушма субсидие пĕтĕмпе 111,150 пин тенкĕлĕх панă. Çапла вара иртнĕ çулта çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черетре тăнă тĕп списокри тата резерври пур çамрăк çемьесен ыйтăвне те тивĕçтернĕ. Асăннă суммăран укçа-тенкĕ юлнипе район администрацийĕ тĕп списока тепĕр çамрăк çемьене кĕртрĕ, ăна та свидетельство пачĕ.

Кăçалхи май-июль уйăхĕсенче вара тепĕр 7 çемьене Перекет банкĕн Муркашри уйрăмне кредит илме ятăмăр. Вĕсенчен виççĕшĕ 1632, 204 пин тенкĕлĕх кредит илчĕç. Пĕтĕмпе вара кăçалхи списокра 11 çамрăк çемье тăрать.

Тепĕр “2010 çулччен яла социаллă аталантарасси” программăпа килĕшўллĕн района 2830 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Çав шутран яллă вырăнта пурăнакан граждансене пулăшма – 1230 пин тенкĕ, çамрăк çемьесемпе специалистсене пулăшма – 1600 пин тенкĕ. Çапла вара кăçал асăннă программăпа килĕшўллĕн ялсенче пурăнакан 5 çын федераллă бюджетран тăвакан çуртăн 30 процентчĕ чухлĕ субсиди илĕ. Çамрăк çемьесемпе специалистсенчен кăçал ку çăмăллăхпа 6 çемье усă курĕ: федераллă бюджетран 30 процент чухлĕ, тепĕр 40 процентчĕ – вырăнти бюджетран.

Кунсăр пуçне тата ял тăрăхĕсене 3190 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Асăннă суммăн пĕр пайне 2002-2010 çулсенчи “Çурт-йĕр” федераллă тĕллевлĕ программăн “Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси” программăпа килĕшўллĕн çамрăк çемьесене субсиди пана чух усă курмалла. Тепĕр пайне “2010 çулччен яла социаллă аталантарасси” программăпа килĕшўллĕн çамрăк специалистсене çурт-йĕрлĕ пулма пулăшнă çĕре ямалла. Ытти сумми вара ял тăрăхĕсенчи çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнисем хушшинче пайланса каять.

Хальхи вăхăтра çак тавăрса памалла мар субсидисемпе вĕсене илекенсене вăхăтра тивĕçтерессипе ĕçлетпĕр. Çавăн пекех 2002-2010 çулсенче “Çурт-йĕр” тĕллевлĕ федераллă программăн “Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси” подпрограммипе килĕшўллĕн 2008 çулта субсиди тивĕçекенсен спискне хатĕрлесе çўлерех органсене тăратассипе тимлетпĕр.

**–Владимир Германович, район центрĕнче хута каймалли тепĕр объект вăл – физкультурăпа спорт комплексĕ. Хăçан вăл пĕтĕмпех ачасемпе çамрăксен сассипе тулĕ?**

–Паян асăннă объектра ĕçсем малалла пыраççĕ. Бассейн валли ванна лартма вырăн хатĕрлеççĕ. Çавăн пекех çуртăн çивиттине тăрăллă туса витме пуçлаççĕ кĕçех. Кунта та Муркашри тата Москакассинчи çўлерех асăннă çуртсенче те хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацийĕн строителĕсем вăй хураççĕ.

Хальлĕхе кунти ĕçсене туса иртторме 21 миллион тенкĕ укçа килнĕ республикăран. Пĕтĕмпе вара 80 миллион тенкĕ кирлĕ: çав шутран 40 миллионĕ – федераллă бюджетран, тепĕр 40 миллион тенки – республика бюджетĕнчен. ЧР Президенчĕ Н. В. Федоров Министрсен Кабинечĕн иртнĕ ларăвĕнче Муркашри физкультурăпа спорт комплексне кăçал хута ямалли объект тесе палăртрĕ.

**–Районти çулсем çинче те паян хĕрў ĕç вĕрет. Кăмăллă-и Эсир строительсен çак ĕçĕпе?**

– Юрпаша, Пиккикассине, Мăрсака çити çул туса пĕтернĕ. Çитес вăхăтрах ку ĕç тепĕр 4 объектра вĕçленет: Пушкара, Платкассине, Чуманкассине, Опрыскъялне çити. Асфальт çула Ситуккассине, Эхветкассине, Раккаша çити, çавăн пекех Иштерекрен Вускассине çити те тума пуçланă. Пĕтĕмпе вара районта ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшўллĕн кăçал 24 ял патне çити асфальт çул сармалла.

Кунсăр пуçне Кăпасри çула общественăлла центр патне çити тăсрăмăр. Муркашри Колхозная тата Новая колхозная урамсенче халь асфальт çул тăваççĕ. Çавăн пекех Иштерекпе Мăн Токшика çити пуçласшăн çул тума.

Çĕнĕ çулсем тунипе пĕрлех çулсене юсассине, пăхса тăрассине те кайри вырăна хăвармастпăр. Пĕтĕмпе çул тума тата юсама район бюджетне 45 миллион та 948 пин тенкĕ укçатенкĕ килнĕ. Тойкилтĕрен Кĕртекассине каякан çула, “Волга” – Вăрăмой çулсене юсанă. Мăн Хураçкана каякан, Муркаш–Хорнуй–Платкасси çулсене юсамалла. Пĕтĕмпе вара кăçалхи 7 уйăхра 3,53 (пĕлтĕр – 2,62) километр çул тунă. Çав шутран çĕнĕрен тунисем – 1,04 километр, 2,49 километр çула юсанă.

**–Професси уявĕ умĕн районти строительсене мĕн калана пулăттăр?**

–Районти мĕн пур строителе, çулсем çинче ĕçлекен пĕтĕм подряд организацийĕсен ĕçченĕсене уяв ячĕпе саламлатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

**Строительсен кунĕ умĕн**

# 30 çул строительствăра

Ялти ача-пăчана çамрăклах «куршанкă çыпçăнать». Кашмаш ялĕнче пурăнакан Виталий Архипович Архипова та çав шăпах пўрнĕ. Ачаллах ĕç çумне çыпăçнă. 1933 çулта çуралнă вăл. Ачалăхĕ çăмăл килнĕ теме çук.

Кăвак шуçăмла тăрса ĕçре пилĕк авма тивнĕ. Çапах та



пуçа усман, çут малашлăха ĕненнĕ. Хăйĕн пĕтĕм ĕç çулĕсене вăл «Свобода» хуçалăхра иртternĕ. 1993 çулта тивĕçлĕ канăва тухиччченех. Вĕсенчен 30 çулне Кашмашри 1-мĕш номерлĕ строительство бригадинче вăй хунă.

Виталий Архипович – пултаруллă платник. Платник ĕçĕ вара пĕрре те çăмăл маррине пурте пĕлетпĕр. Алă çыпăçман çын платник пулса ĕçлеймест.

Виталий Архиповича ку енĕпе хурлама çук. Пуртăпăчкă, сава унăн аллинче вылянса кăна тăнă темелле. Пĕрлешўллĕ хуçалăх объекчĕсене шутламасан та, миçе çынна çурт-йĕр çĕклеме пулăшман-ши тата? Яланах ĕçе тĕплĕ, пĕлсе пурнăçланипе палăрса тăнă. Çавăнпах ĕнтĕ ял-йыш ăна тивĕçлипех хисеплет, тĕрлĕ çулсенче илнĕ Хисеп грамотисем те унăн ĕçченлĕхне çирĕплетеççĕ.

Строительсен кунĕ çывхарса килет. Çавна май манăн ăна çак кун ячĕпе чунчĕререн саламлас килет. Пурнăçĕнче ыррине çеç курмалла пултăр. Хăй вăхăтĕнче пире ырă сĕнў-канашсем парса пулăшнăшăн, ĕç вăрттăнлăхĕсене алла илме пулăшнăшăн тав сăмахĕ кăна калатпăр.

Вăл манăн ырă кўршĕ пулнă май, халĕ те ĕçсем епле пынипе интересленет. Строительсен бригадинчи, хуçалăхри ĕçсем пирки ыйтса пĕлет.

Пурнăçĕнче мăшăрĕпе пĕрле Виталий Архипович хĕрпе ывăл çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Хĕрĕ – медицина сестри, ывăлĕ вара ашшĕн çулнех суйласа илнĕ. Мăнукĕсем те савăнтараççĕ ветерана. Килсех тăраççĕ вĕсем патне.

**И. МАЙКОВ.**

**Сăн ўкерчĕкре: В.А. Архипов.**

**Харпăр хăй вăйĕпе, малашлăха пăхса**

# “Пўрт тума кирлĕ укçана вунă çул пуçтартăм”, –

***терĕ ĕç кунĕ хыççăнхи кĕске калаçура ял хĕрарăмĕ З. Павлова***

Таврана каç ĕнтрĕкĕ хупларĕ ĕнтĕ. Çурла уйăхĕн хăйне евĕр сивĕ каçĕ яла пырса кĕчĕ. Яра кунра ĕшеннĕ ял çыннисен пўрчĕсенче умлă-хыçлă çутă сўнет: ĕçре ĕшеннĕ çынсем пурте черетлĕ ĕç кунĕ умĕн ыйха путаççĕ. Тўпери çăлтăрсем те уйăх каяллахи пек ăшшăн пăхмаççĕ ĕнтĕ. Кĕр çывхарать.

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракассинче пурăнакан Зоя Андреевна Павлова сăмахĕсене ялти стройкăна активсе курман çынна итлеме çăмăл, анчах çак сăмахсем хыçĕнче мĕн чуль йывăрлăх, пурнăçри кулленхи савăнăç-илеме ума лартнă пĕр тĕллеве пурнăçласси шĕн айккине хăварни, ытлă-çитлĕ çименни тата паха тум тăхăнманни...

– Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăнхи ачасен шутне кĕретпĕр те юхăннă çĕршывăмăра ура çине тăратнă çулсем йăлтах пирĕн куç умĕнче пулса иртрĕç. Хамăр та утма пуçланă-пуçламан строительство ĕçне кўлĕнме пуçларăмăр. Аттеаннесемпе пĕрле ниме йĕркипе ял тăрăх килтен киле çурт-йĕр тума, пуррине çĕнетме çўреттĕмĕр. Ачаллах ал-ура строительство ĕçĕнче хытрĕ. Тепĕр чух вăйă выляма та вăй юлмастчĕ. Анчах тепĕр кунне хамăр тунă ĕçсем çине пăхсан чун хăпартланатчĕ.

Çапла çĕнелме пуçларĕç ялсем 50-60-мĕш çулсенче. Унтанпа нумай шыв юхрĕ ĕнтĕ, анчах мĕн туни йăлтах асра. Хама илес пулсан, ĕмĕрлерĕм стройкăра. Атте Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен инвалид пулса таврăннă май нумай ĕçсене ĕçлейместчĕ те Иван пиччепе иксĕмĕрĕнех килти строительство ĕçĕсене пурнăçлама тиветчĕ. Анне куллен колхоза ĕçе çўретчĕ. Çавăнтанпа строительство манăн пурнăçăн уйрăлми пайĕ пулса тăчĕ, – каласа парать виçĕ çул каялла тивĕçлĕ канăва тухнă Зоя Андреевна.

Ял хĕрарăмĕ пурнăçне строительствăна халаллани çакăнтан та курăнать. 1949 çулта Йўçкасси тăрăхĕнчи Вăрманкас ялĕнче çуралнăскер, 21 çулта Çатракассине качча тухать. Килте те стройкăран ют пулманскерĕн хăйне валли йăва çавăрсан та çак ĕçрен айккалла пăрăнма тивмест. 37 çул хушшинче унăн мăшăрĕ, ачисем, тăванĕсем, ял çыннисем пулăшнипе кăçал пурăнмалли иккĕмĕш çурт, икĕ хутчен сарай тума тивет. Мĕн чуль вăй, тăрăшулăх тата тимлĕх... “Шыв çиелте вырăнта пурăнатпăр та ĕлĕкрех çирĕп яман никĕссем выляса стенасене çурса яраççĕ. Кил хуçин кунне пĕр пăта çапмалла тенине шута илсе кашни юхăнаканах вăхăтра юсама тăрăшатпăр. Акă 2004 çулта кирпĕч сарая сўтсе çĕнĕрен купаларăмăр”, – каласа парать хăй тунă ĕçрен ютшăнмасăр З. Павлова.

Мăшăрĕпе пĕрле (вăл 1982 çулта вăхăтсăр çĕре кĕнĕ) щитран тунă пўртĕн эксплуатаци срокĕ тухнă май Зоя Андреевна çĕнĕ пўрт лартасси пирки пĕрремĕш çул мар шутланă. Тăватă ача (икĕ ывăлпа икĕ хĕр) çуратса ўстернĕ чăваш хĕрарăмĕ килте юлнă кĕçĕн ывăлĕпе Юрийпе вунă çул ĕнтĕ ĕç укçине çĕнĕ пўрт валли пухса пынă. Газпа электричествăшăн тўлеме усă курнинчен ытла укçана аларан кăларман. Кунсăр пуçне çулленех 4-шар сысна, вăкăр е тына самăртнă-усранă. Укçи – йăлтах çĕнĕ пўрт тума!

Зоя Андреевна ĕç ĕмĕрне пуçлăхра ирттермен. Шкул пĕтерсенех çамрăк хĕр “Ударник” хуçалăхăн Вăрманкассинчи ĕне фермине дояркăна вырнаçать. Ĕçре ырă ят илнĕскер качча тухсан малтанах “Свобода” хуçалăхри уй-хир бригадинче ĕçленĕ хыççăн чун ыйтнипе 14 çул ĕнтĕ общественăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче: малтанах – дояркăра, тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн паянччченех – конюхра. Пўрт тума отпуск илнĕ хĕрарăм ял çыннисем, кўршĕсем, ачисемпе тăванĕсем пулăшнипе çĕнĕ пўрте иртнĕ кунсенче çивитти айне лартрĕ пулсан та, унта пурăнма кĕриччен пурнăçламалли ĕçсем чылай-ха. “Тăватпăрах, пурăнма кĕретпĕрех!” – çирĕппĕн калать кил хуçи черетлĕ çĕр каçма çывăхрах уйрăлса тухнă ывăлĕ патне кайма пуçтарăннă май.

Çапла пурăнать, малашлăха пăхса ача-пăча çуратса-ўстерсе çурт-йĕр çавăрать, куллен хуçалăх ĕçне хутшăнать ял хĕрарăмĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕсем.**



**Алексей Никитин хăй те çурт лартнă, кўршĕне пулăшма та хирĕç мар.**



**Ю. Михайловпа В. Жоржиков кирпĕч хурас ĕçре ыттисенчен кая юлмаççĕ.**



**Эпир пĕчĕкрех, анчах хăйăр ывăтма пултаратпăр!**



**Кам каланă строительство ĕçĕ хĕрарăмăн ĕçĕ мар тесе?**



**Тимур Барминов растворпа тивĕçтерсех тăчĕ.**